Петров Н.П. К.В. Иванов творчествинчи автор сăнарĕпе унăн уйрăмлăхĕсем // Чăваш илемлĕ литература чĕлхи. – Шупашкар, 1978. – С. 97-110.

*Н. П. ПЕТРОВ*

# К. В. ИВАНОВ ТВОРЧЕСТВИНЧИ АВТОР САНАРĔПЕ УНĂН УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

Кирек епле эпикăлла произведенире те унăн тĕп шăнăрĕ—автор сăнарĕ. Вулавçă умне тĕрлĕ сăпатпа тухса, вăл произведени сюжетне аталантарать, унти персонажсен сăн-сăпатне ӳкерчĕклет, характерĕсене палăртать, ĕмĕт-шухăшĕсемпе паллаштарать, ăçне-хĕлне, кĕрешĕвне кăтартса парать, геройсен пурнăçĕнчи е çутçанталăкри объективлă пулăмсене субъективлă хакласа, илемлĕ произведение хăйне тивĕçлĕ тĕс кӳрет. Кунта эпир К. В. Ивановăн эпикăлла произведенийĕсенчи автор сăнарĕпе унăн чĕлхин уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăрасшăн.

К. В. Иванов творчествинче автор сăнарĕ нумай енлĕ. Кашни произведенирех вăл хăйне евĕрлĕ. «Тимĕр тылă» балладăра вăл вулавçăсем умне халапçă пулса тухать. Пĕрремĕш сăпат формине йышăнса, вулавçăсемпе (е итлевçĕсемпе) тӳрремĕнех калаçăва хутшăнать, вĕсене хăйĕн халапĕпе кăсăклантарас, вĕсен тимлĕхне çивĕчлетес тесе, ыйту парать, хăех çав ыйту çине хуравлать. Асăрхăр:

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпать инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? Пĕлĕр-ха!
Акă мĕншĕн калам-ха! (110 стр.) *.

Анчах калавçă халап тĕрĕслĕхĕ пирки ответлăха хăй çине илесшĕн мар, пĕтĕмпех «тет» çине ярать. Пуплев сăмахĕ «тет», юмах чĕлхин тĕп элеменчĕсенчен пĕри пулса тăраканскер, повествовани мĕнле жанр йĕрĕпе аталанассине систерет.

Ĕнтĕ пĕлсе çитрĕр-и
Мĕншĕн пирĕн инкесен

* Тĕслĕхсене çак кĕнекерен илнĕ: *Константин Иванов.* Çырнисен пуххи. Шупашкар, 1957.

Тимĕр тылă тесенех
Сехри хăпса тухнипе? —

ыйтать халапçă вулавçăсенчен (110—112 стр.). Унтан тимĕр тылăпа пулса иртнĕ пĕр ĕç çинчен калама тытăнать. Ун çинчен мĕншĕн каласа пама шутланине те ăнлантарса парать:

Кам та пулсан шанмасран
Е вăрçасран хăраса,
Пĕр ĕç çинчен калам-ха,
Хамăр ялта пулнине. (112 стр.)

Калавçă хăйĕн халапне такмаклană хушăра та вулавçăсене (итлевçĕсене) асран ямасть, вĕсене час-часах сăмах хушкаласа илет, асăрхăр:

Ĕнтĕ хăвăр та пĕлĕр
Карчăк суккăр пулнине. (112 стр.)

Тепĕр тĕлте:

Чĕкеç кинне карчăкĕ
Темшĕн ытла юратмасть,
Хăвăр тупăр мĕншĕнне,
Ана чĕлхем калаймасть,—

тесе асăрхаттарать.

Е тата:

Хăвăр пĕлетĕр: юсман,
Ырăсене асăнса
Вĕрсе-сурса пĕçерсен,
Пит хăватлă япала,—

тесе аса илтерет (116 стр.). Вĕçлессе вара ваттисен сăмахĕпе вĕçлет:

Халăх шăв-шавĕ пĕр вĕçлĕ,
Шăв-шав сăмах çĕр тĕслĕ. (126 стр.)

Çак йĕркесемпе автор тепĕр хут балладăри ĕçсене халăх фантазийĕ шухăшласа кăларни çинчен асăрхаттарать.

«Тăлăх арăм» балладăри ĕçсем те калавçă куçĕ умĕнче пулса иртеççĕ. Вĕсем çинчен калавçă пĕрремĕш сăпат формипе каласа парать. Анчах калаври ĕçсен пурнăçри чăнлăхĕ пирки вăл малтанхи йĕркерех асăрхаттарса хурать:

Юмах юпа тăрринче,
Хам урхамах çийĕнче. (128 стр.)

Балладăна халăх юмахĕсен пуçламăшĕнчен юптарма тытăнни çак произведенин жанрне тӳрех уйăрса илме, унта çырса кăтартакан ĕçсене пĕр иккĕленмесĕрех юмах тесе йышăнма пулăшать. Ĕçсем юмахра пулса иртни çинчен калавçă малалла та аса илтерсех тăрать: *çичĕ ют, çичĕ тăван, çичĕ кин, çичĕ кашăк, сăсар çĕлĕк, сенкер сăнă, хура юн* тата ытти фольклор элеменчĕсем произведение пĕтĕмпех юмах сюжетлă тăваççĕ. Калавçă чĕлхи те халăх сăмахлăхĕн чĕлхине çывăх. Пуплев хăвăртлăхне ӳстерме, ĕçсен пулăмне вăйлатма калавçă çине-çинех глаголсемпе усă курать, хутлă глаголсенче икĕ компонентне те пĕр формăра йĕркелет, час-часах повторсем тăвать, халăх чĕлхинчи эпитетсемпе усă курать:

Вĕçсе-вĕçсе пытăм та
Килтĕм тухрăм çакăнта. (128 стр.)

Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те тытăçать. (128 стр.)

Çеçен хирте çил вылять,
Сарă ыраш хумханать.
Сарă ыраш хумханать
Чăваш чунне йăпатать. (130 стр.)

Ыраш ӳкет касăлса,
Пулать тăрать кĕлтесем,
Кăтра пуçлă çĕмелсем. (130 стр.)

«Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» балладăсем юмах сюжечĕ çинче никĕсленсе тăраççĕ пулин те, вĕсенчи калавçă сăнарĕсем — реализмлă сăнарсем. Вĕсем хăйсен калавĕсенче вăл вăхăтри социаллă пурнăçăн çивĕч ыйтăвĕсене хускатаççĕ, обществăри танмарлăхпа тĕрĕсмарлăха курăмлăн ӳкерчĕклесе кăтартаççĕ, çынсем хушшинчи ырăпа усал çав танмарлăхпа тĕрĕсмарлăхран тухса тăнине систереççĕ.

К. В. Иванов творчествинчи автор сăнарĕн реализмла вăйĕ уйрăмах «Нарспи» поэмăра туллин палăрать. Кунта вăл хăйĕн пуплевне виççĕмĕш сăпат форминчи автор ятĕнчен йĕркелет. Калавçă вичкĕн куçлă, пысăк туйăмлă, тарăн шухăшлă, çав вăхăтрах шухă чунлă та çепĕç чĕлхеллĕ гуманист, хăй куçĕ умĕнчи пурнăçа — çутçанталăк пулăмĕсене, çынсен ĕçне-хĕлне, кăмăл-туйăм палăрăмĕсене вичкĕн художник куçĕпе сăнарласа ӳкерчĕклет. Кашни ӳкерчĕк, кашни сăнлăх валли тивĕçлĕ сăмах, тивĕçлĕ интонаци шырать. Глаголсен вăхăтне тăтăшах ылмаштарни повествовани чĕлхине юхăмлă, чĕрĕ

интонациллӗ тӑвать. Чӗрӗ мар япаласене, ҫутҫанталӑк пулӑмӗсене чӗрчун пек сӑнарласа ӳкерчӗклени повествовани чӗлхин экспрессилӗхне ӳстерет, сӑнлӑхсене куҫ умне яланлӑхах асра юлмалла кӑларса тӑратать.

Пуш уйӑхӑн вӗҫӗнче
Хӗвел пӑхрӗ ӑшӑтса,
Силпи чӑваш ялӗнче
Юр ирӗлчӗ васкаса,—

пуҫлать автор поэмӑна (138 стр.). Малалла, илемлӗх мелӗсемпе анлӑн усӑ курса, иртсе каякан хӗле сӑнарлать:

Сивӗ, хаяр хӗл иртет,
Қаять йӗрсе, хурланса;
Сивӗ куҫҫульпе йӗрет
Иртнӗ куншӑн хуйхӑрса. (138 стр.)

Кунта яланхи паллӑ ячӗсем *сивӗ, хаяр,* сӑнарлӑ чӗлхе хутлӑхне кӗрсе, илемлӗх мелӗ — эпитет пулса тӑраҫҫӗ, *йӗрсе, хурланса, хуйхӑрса* глаголсем сӑпатлантару, *куҫҫуль* япала ячӗ метафора пӗлтерӗшӗсене йышӑнаҫҫӗ.

Ҫутҫанталӑка чӗрӗлӗх, чӗрчуна ырлӑх, эмеме савӑнӑҫ кӳрекен ҫуркунне ҫинчен автор ҫӗкленӳллӗн, хавасланса пӗлтерет. Қӑмӑл-туйӑм ҫӗкленӗвне палӑртма эмоциллӗ пуплев мелӗсемпе усӑ курать. Ҫавӑн пек мелсенчен пӗри — инверси. Акӑ мӗнле пуҫланать строфа:

Қилчӗ ырӑ ҫуркунне,
Қилчӗ ячӗ ӑшӑтса.
Хӗвел савать тӗнчене,
Хӗл ӑйхинчен вӑратса. (138 стр.)

Илемлӗ стильре сӑмахӑн туйӑмӗ, мелӗн виҫи пур. Ҫакӑ Қ. Иванов чӗлхинче те лайӑх сисӗнет. Ҫуркунне ҫитни ҫинчен калакан иккӗмӗш строфан пӗрремӗш сӑввинче (куплетӗнче) усӑ курнӑ инверси ун хыҫҫӑнхи куплетсенче «тӗрӗс» предложенисемпе ылмашать. Апла пулин те пуплев интонацийӗ улшӑнмасть, сӑмахсем ҫав-ҫавах, хаваслӑ-ҫӗкленӳллӗ туйӑм ҫуратса, тӑрӑ ҫӑлкуҫ шывӗ пек шӑнкӑртатаҫҫӗ. Сӑмахсен семантики, глаголсен хальхи вӑхӑт форми, предложенисен ансатлӑхӗ, сӑвӑ йӗркисен тытӑмӗпе янӑравлӑхӗ — пурте ҫак тӗллеве пӑхӑннӑ. Вӗсем калавҫӑн оптимизмлӑ кӑмӑл-туйӑмне палӑртаҫҫӗ. Оптимизмлӑ, ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл-туйӑм виҫҫӗмӗш строфара та вӑйлӑ сисӗнет. Анчах кунта пуплеве урӑхларах— лӑпкӑ мӑнаҫлӑх кӗввипе (интонацийӗпе) йӗркеленӗ. Шу-

хăйша татăклăн, мăнаçлăн palăртма калавçă ят предложенисемпе, ят сказуемăйсемпе, тĕрĕслетӳллĕ повторсемпе, кĕскен каласан, паузăллă, тăнăçлă конструкцисемпе усă курнă. Глагол-сказуемăйсем кунта палăрмаççĕ те, танл.:

Силпи ялĕ — пуян ял,
Ларать вăрман ăшĕнче.
Кантур пекех çурчĕсем
Ват йăмрасен айĕнче.

Ялĕ тавра укăлча,
Çĕнĕ çатан укăлча,
Кив капанлă анкарти,
Тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча. (140 стр.)

Малалла та çавăн пекех. Тăваттăмĕш строфари пуплев шухă кĕвĕпе ылмашать. Çутçанталăк асамлăхне, пурнăç илемне автор чуна çĕклентерекен хаваслăхпа сăнласа кăтартать. Кăмăл-туйăма килентерекен тĕслĕ-тĕслĕ ӳкерчĕксем, куç умне чĕррĕн тухса, пĕрин хыççăн тепри черетленсе иртеççĕ. Ял çумĕпе çырми кĕрлесе юхать, хĕвелĕ тĕрĕ тĕрлесе вылять, тăрă шывăн айĕнче кăвак пĕлĕт явăнать, ватă йăмра тайăлса, тĕсне пăхса савăнать, пулăç старик йăпăрт-йăпăрт пуллине ăманпа илĕртсе ларать т. ыт. те. Пуплев динамикине ӳстерме автор çинеçинех куçăма пĕлтерекен глаголсен хальхи тата курса иртнĕ вăхăт формисемпе усă курать. Поэмăн ытти строфисен чĕлхи пирки те çавнах каламалла. Кашни строфара тенĕ пекех пуплев кĕвви улшăнса тăрать. Повествование çапла йĕркелени поэма чĕлхине пуян кĕвĕллĕ, чĕрĕ интонациллĕ, экспрессиллĕ тăвать.

«Нарспи» поэмăри калавçă ăста художник кăна мар, эмоциллĕ лирик та, философ та. Повествование е описание час-часах риторикăллă кăшкăрусем, ыйтусем, чĕнӳсем, лирикăллă çаврăмсем хушса, пуплеве пысăк туйăм, тарăн шухăш хывать.

Аслă калăм эрнинче
Мĕнле чăваш ĕçмен-ши?!
Тарăн нӳхреп ăшĕнче
Мĕн чухлĕ сăра пĕтмен-ши?!
Ĕçнĕ те, çав, çинĕ те,
Йĕркипеле сикнĕ те.
Унсăр пуçне еплелле
Тăвас тетĕн праçнике? —

тет вăл пĕрремĕш сыпăкăн улттăмĕш строфинче (144 стр.). Автор пурнăç илемĕпе киленсе рехетленнĕ ху-

шăра ўнăн тўнтер енĕсене те асăрхамасăр йртмест. Ялти ырă йăла-йĕркепе пĕрлех ĕçкĕ-çикĕпе виçерен тухиччен айкашасси те пур иккен. Çавăн пек айкашакансенчен автор тăрăхлать, ирони çивчĕшĕпе питлет, танл:

Ĕçе-ĕçе каçала
Ўсĕр чăваш ывăнать,
Çуркуннехи пылчăк та
Канма çемçе туйăнать.
Выртать чăваш улпут пек,
Шухăшламасть ăçтине,
Пĕтĕм урам тăршшĕпе
Кăшкăрать хăй юррине. (144 стр)

Автор, усалпа ырра уйăрса, тĕнчене контрастлă сăнлать. Акă каллех «Нарспи» поэмăн пĕрремĕш сыпăкне илĕпĕр. Пĕр енчен — çĕршыв хĕл ыйхинчен вăранса чĕрĕлет, чечексем таврана ырă шăршă сараççĕ, кайăк-кĕшĕк хавас юрă кĕвĕлет, çемçе курăк çинче путек-сурăх сиккелет, тепĕр енчен — выçă кĕтў ачи ял еннелле тилмĕрсе пăхать, ăна çут тĕнче ырлăхĕ те, аллинчи шăхличĕ те йăпатаймасть. Поэмăра çак хирĕçўлĕх, тарăнланса пырса, конфликта куçать. Конфликтăн социаллă сăлтавне автор пĕрремĕш сыпăкăн улттăмĕш строфинче лирикăллă çаврăмпа палăртать.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.
Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать. (144 стр.)

«Нарспи» поэмăри сăнарсен системи икĕ тĕп ушкăнран тăрать. Пĕр ушкăнĕнче—Нарспи, Сетнер, Сетнер амăшĕ. Иккĕмĕшĕнче — Тăхтаман, Михетер, Михетер карчăкĕ. Нарспипе Сетнер таса юратушăн, уйрăм çын ирĕклĕхĕшĕн, çемьери танлăхшăн тăраççĕ. Вĕсемшĕн пулсан, çемье телейĕ — пĕрне-пĕри савса, тĕрĕс-тĕкел, тату пурăннинче. Михетерпе Тăхтаман — кивĕ йăла-йĕрке хўтĕлевçисем. Вĕсемшĕн пĕтĕм ырлăх — мулра, çемьере — арçын пуç, хĕрарăмăн ăна пăхăнса-итлесе кăна пурăнмалла. Поэма авторĕ вара пĕтĕмпех Нарспипе Сетнер енче. Кивĕ йăла-йĕркепе конфликта кĕрекен Нарспи сăнарне автор нумай енлĕн кăтартма тăрăшать. Унра чăваш хĕрарăмĕн чи паха енĕсем палăраççĕ, вăл çынсемпе

кăмăллă, ĕçре шухă, вăйăра хавас, пĕр юратсăн — ĕмĕрлĕх.

Чĕлхе хатĕрĕсене ăста йĕркелесе, автор Нарспи ĕçченлĕхне чĕррĕн сăнарлать. Çамрăк пике, тĕрĕ тăвать-и е çĕвĕ çĕлет, пир тĕртет-и е çĕрĕ çăмхалать — пур ĕçре те алли-ури вылянса кăна тăрать. Çакна эпир пуплев (сăвă) ритмикинче те лайăх сисетпĕр. Ĕçĕн динамикине кăтартма автор çине-çинех сасă пусăмне хăйсем çине йышăнакан глагол-сказуемăйсене суйласа илет, предложенисене хисеплев интонацийĕпе çыхăнтарать, танл.:

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
Е пурçăн çип илет те
Юрла-юрла тĕрĕ тăвать;
Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать... (150 стр.)

Нарспие сăнланă чух автор халăх поэтикин мелĕсемпе анлă усă курать, танл.:

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет,
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет. (146—148 стр.)

Ку «Сарă хĕр» сыпăкăн пуçламăшĕ. Унăн малтанхи строфине параллелизм мелĕпе йĕркеленĕ. Пуçламăш икĕ йĕркинче поэт симĕс курăк хушшинче ӳсекен сарă чечек çинчен каланă. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ха кунта сарă чечек çинчен асăнни? Сарă чечек халăх ăнланăвĕнче чи илемлĕ чечек шутланать. Симĕс курăк хушшинчи сап-сарă чечек тата илемлĕрех курăнать. «Ешĕл курăк хушшинче сап-сарă чечек ӳсет» тени вулакан асĕнче илемлĕ чечек сăнарне çуратать. Ун хыççăн тепĕр икĕ йĕркинче поэт «Аслă Силпи ялĕнче Нарспи ятлă хĕр ӳсет» тесе пĕлтерет. Вулакан асĕнче сап-сарă чечекпе юнашар Нарспи сăнарĕ тухса тăрать, сарă чечек илемĕ Нарспие куçать. Урăхла каласан, поэт, психологиллĕ ассоциаци мелĕпе усă курса, Нарспи сăнарне сап-сарă чечек сăнарĕпе çыхăнтарать. Ешĕл курăк хушшинче сап-сарă чечеке курсан, пирĕн ăшра мĕнле ырă кăмăл-туйăм çуралать, Нарспи çине те эпир çав кăмăл-туйăмпах пăхма тытăнатпăр. Çак ачаш та çепĕç кăмăл-туйăма вăйлатса çирĕплетме поэт малаллахи йĕркесенче халăх чĕлхинчи танлаштару мелĕпе усă курать;

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек. (148 стр.).

Малалла танлаштаруллă описани ахаль описанипе ылмашăнать:

Явăнаççĕ хыçалта
Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çĕкленет.
Çӳхе тути кулнă чух
Каччăн чунĕ çемçелет. (148 стр.).

Илсе кăтартнă йĕркесенче автор Нарспи портретне (сăн-сăпатне) аякран сăнаса тăракан фотограф пек ӳкерсе кăтартрĕ пулсан, малаллахи тăвата йĕркере вăл Нарспи пирки хăй мĕн шухăшланине риторикăллă ыйтупа палăртать:

Хирти сарă чечеке
Ашă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ? (148 стр.)

Ку фотографи ӳкерчĕкĕ мар, автор пĕтĕмлетĕвĕ. Риторика кунта автор пĕтĕмлетĕвне эмоциллĕ палăртма, урăхла каласан сăмах витĕмне вăйлатма кирлĕ. Сăнарлăхпа эмоцилĕх, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса, произведени чĕлхине чĕрĕ вăй кӳреççĕ.

«Нарспи» авторĕ халăх сăвви-юррисенче сарăлнă параллелизмла конструкцисемпе герой сăн-сăпатне ӳкерсе кăтартнă чухне кăна мар, унăн кăмăл-туйăм хусканăвне палăртма та анлă усă курать. Психологизмлă параллелизмсемпе вăл Нарспин Тăхтаман патĕнчи асаплă пурнăçĕн драматизмне вăйлатать:

Хирте ака айĕнче
Çерем лап-лап касăлать;
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи чунĕ касăлать.
Хирте çава айĕнче
Курăк вăш-ваш йăванать;
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи пуçĕ усăнать... (208 стр.)

Автор çак мелпе Нарспи туйне ялйыш епле хавасланса-ăмсанса кĕтнине те, ӳсĕр Тăхтаман пуçĕнче тĕнче вăр-вăр

ҫавраннинĕ те ӳкерчĕклĕ кăтартса паратъ.

«Нарспи» поэмăн пуплевне виҫҫĕмĕш сăпат формипе йĕркеленĕ пулин те, автор хăйĕн сăнарне кăтартма майсем тупать. Вăл вăхăтăн-вăхăтăн пуплев сăпачĕпе интонацине улăштарать те вулавҫăсемпе е хăйĕн персонажĕсемпе тӳрĕ калаҫăва хутшăнать, ҫĕнĕ информаци парать е асăрхаттарса хăварать, танл.:

Унтан урăх Сетнерĕн
Нимĕн те ҫук япала.
(Анчах асту: Михетер
Хĕрне памасть ҫуккалла) (154 стр.)

Ĕ тата:

Ват упăшка хĕснине
Нарспи тӳсрĕ ҫавăнччен.
Анчах тепĕр эрнинче,
Пĕрре уяр ырă каҫ...
(Чим-ха, кăна калама
Вăхăтсăрах юрамасть.) (214 стр.)

Кирлĕ вăхăтра комментари парать:

Кӳҫне уҫнă-уҫманах
Чăваш ларать мунчинче.
Ҫимĕк кунĕ йĕркипе
Ҫынсем мунча кĕреҫҫĕ.
Ҫимĕк курăкĕпеле
Ҫан-ҫурăмне хĕртеҫҫĕ
(Ват аттесем, аннесем
Ҫапла хушса хăварнă). (170 стр.)

Ыйту лартать, хăех ăнлантарса парать:

Шăпăр сасси илтĕнмест,
Шăпăрҫи те курăнмасть.
Ырă хăна хушшинче
Эрех-сăра тăкăнмасть.
Стариккипе карчăкки
Хура пӳртре вăрҫаҫҫĕ
Мĕн пулнă-ши ҫав тĕрлех —
Пурте шăппăн лараҫҫĕ?
Шăппăн-шăппăн лармасăр:
Вĕсен хĕрĕ ҫук паян,
Нарспи усал Сетнерпе
Тарса кайнă вăйăран. (186 стр.)

Паллах, *усал* эпитет кунта автор Сетнере хурланине пĕлтермест, вăл, Михетерсен хутне кĕренҫи пек пулса, вĕсенчен тăрăхланине кăтартать. Йĕркерен тухсан, автор персонажсене хăтăрса илме те хатĕр. Акă, тĕслĕхрен, пĕрремĕш сыпăкăн 6—8 строфисенче чăвашсем аслă калăм эрнине мĕнле уявланине кăтартнă.

Ҫалӑм иртет, юр пӗтет,
Ҫурхи суха та ҫитет;
Чӑваш часах урӑлмасть,
Мухмӑр иртсе каяймасть.

Паян-ыран ҫуракине тухмалла, анчах чӑваш хаклӑ вӑхӑта мухмӑрпа анӑрашса ирттерет. Кунта автор хӑйӗн лӑпкӑлӑхне ҫухатать, сассине хӑпартсах мухмӑрҫӑсене хӑтарса ӳкӗтлеме тытӑнать.

Ентӗ, ӳсӗр чӑвашсем,
Урӑр ҫине тӑрӑр-ха!
Ем-ешӗлех ҫӳл тусем,
Шыв та чакнӑ ҫырмара.
Эй, пиччесем, тӑрӑр-ха,
Урлӑ-пирлӗ пӑхӑр-ха:
Ака пуҫне тӳрлетес;
Урапуна тирпейлес;
Сивӗ шывпа ҫӑвӑнсан,
Питне-куҫне тӗс кӗтӗр;
Авӑнтарах апатлан,
Ака тума вӑй кӗтӗр.
Кӳлес ӗнтӗ лашана,
Тухса каяс акана. (146 стр.)

Ака иртет, ҫимӗк ҫитет. Михетер пӗртен-пӗр хӗрне качча парать. Унӑн карчӑкӗ чӗреслӗ сӑрапа яла ӗретлет, тантӑш-тӑванӗсене туя йыхӑрать. Кунта та автор хӑйне нумай кӗттермест. Хӑйӗн персонажӗсемпе вулавҫисен умне тӳрӗ пуплевпе тухса, пурне те Тури касса утмаваскатать, авалхи йӑлапа ваттисене ҫӑкӑр-тӑвар хывса, «савнӑ» Нарспи валли «ырлӑхпа савнӑҫ» ыйтма канаш парать.

Нарспие шурӑ пӗркенчӗк айне лартнӑ. Михетер килӗнче «ырӑ хуҫа хушнипе туй халӑхӗ туй тӑвать». Пурте юрлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ, савӑнаҫҫӗ. Пӗркенчӗк айӗнчи Нарспи вара татӑлса йӗрет: шур сухаллӑ Тӑхтаман ӑна чун савнийӗнчен — Сетнертен уйӑрса илсе каяссинчен хӑрать. Нарспипе Сетнер хуйхи автора та витӗрех пырса тирет, вӗсен шӑпи ҫавӑн пек килсе тухнӑшӑн вӑл чунтанах пӑшӑрханать.

Эсӗ юта кайсассӑн,
Мӗн тӑвӗ-ши Сетнерӳ?
Ырӑ Нарспи аппаҫӑм,
Аҫта санӑн телейӳ (174 стр.),

тесе хуйхӑрать автор Нарспипе пӗрле.

Тӑхтаман туйӗ Силпие пырас умӗн вӑрмана тарса кайнӑ Сетнерпе Нарспие Михетер килне тытса таврӑнса

пĕтĕм халăх умĕнче хĕнесе намăслантарнă хыççăн Нарспие çĕнĕрен пĕркенчĕк айне лартаççĕ. Анчах туй пăсăлнă ĕнтĕ, ташă-юрă татăлнă, туй хаваслăхĕ путланнă. Çĕнĕ кĕрӳ киличчен туя çĕнĕрен хускатса ямалла, пулса иртнĕ намăс ĕçе туй шавĕпе хупламалла. Кунта каллех пуçарăва автор хăй çине илет. Туй такмакĕ кĕвĕлесе тапăртатнă май паян пулса иртнĕ намăс ĕç синчен çĕн кĕрĕве калама кирлĕ марри çинчен асăрхаттарать:

Тăпăр-тăпăр тăпăртăк,
Атьăр шепрех туй тăвар!
Анчах хальхи ĕç çинчен
Çĕн кĕрĕве калас мар. (190 стр.)

Тăххăрмĕш («Çимĕк иртсен») сыпăкра автор Нарспин Тăхтаман патĕнчи асаплă йывăр пурнăçне ӳкерсе кăтартать. Нарспи чунĕ чăтма çук тăвăнса çитсен, автор иккĕмĕш сăпат формипе Тăхтамана хаяррăн питлеме тытăнать:

Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар унăнне!
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан пултăр!
Асаплантар, Тăхтаман,
Нарспи часрах ватăлтăр!
Анчах кайран хăвăнах
Ӳкĕнмелле ан пултăр!.. (214 стр.)

Кунта автор кашни сăмахне е сăмах майлашăвне паузăпа уйăрса, интонаципе палăртса, асра юлмалла витерӳллĕн калать. Кашни сăмахрах Тăхтамана чун-чĕререн курайманни, çав вăхăтрах унтан çивĕччĕн тăрăхлани сисĕнет. «Хĕне, хĕне, Тăхтаман» сăмахсене темиçе хут калани Тăхтаманăн тискерлĕхĕпе чунсăрлăхне асра юлмалла вăйлăн кăтартма, автор иронине витĕмлĕрех палăртма пулăшать.

Вуннăмĕш («Нарспи ĕçĕ») сыпăкра Нарспи пуçĕнче Тăхтамана пĕтерес шухăш мĕнле çурални çинчен каланă. Нарспи пурнăçĕ чăтма çук йывăр, савăнăçлă та телейлĕ çамрăклăх таврăнми иртсе кайнă, унăн чысне таптанă, этемлĕх туйăмне мăшкăлланă. Ана Тăхтаман ырă кун кăтартмасăр, касмăкри йытă вырăнĕнче усрать, хĕнет, пусмăрлать. Мĕне пула çапла пулса тухнă-ха Нарспи пурнăçĕ? Ашшĕ-амăшĕ хăйсен хĕрне юратман çынна ирĕксĕрлесе качча панăран, пуянлăха хапсăнса, хĕрĕн

чунне ăнланманран. Çак шухăша автор уйрăмах вуннă-мĕш сыпăкăн виççĕмĕш строфинче вăйлăн палăртать. Вăл тăвать йĕркеллĕ пилĕк сăвăран (куплетран) тăрать. Вĕсене автор хăйне евĕр йĕркеленĕ. Кашни сăввăн пĕр-ремĕш йĕрки «Качча пачĕç ирĕксĕр» тенипе, виççĕмĕш йĕрки «Атте-анне ăссăрри» е «Атте-анне ăссăртан» тенипе пуçланать. Пĕрремĕш сăвва (куплета) строфа вĕçĕнче тепĕр хут каланă, асăрхăр:

Качча пачĕç ирĕксĕр —
Пулмарĕ-çке ырлăха.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха.

Качча пачĕç ирĕксĕр —
Савăнăç çук ку тĕнчен.
Атте-анне ăссăртан
Савни юлчĕ пĕр-пĕччен.

. . . . . . . . . . .

Качча пачĕç ирĕксĕр —
Пулмарĕ-çке ырлăха.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха. (218 стр.)

Çапла вара, Нарспи телейсĕрлĕхĕн тĕп сăлтавĕ — ăна ирĕксĕр качча пани, ашшĕ-амăшĕ ăссăрри. Çак шухăша витĕмлĕн палăртма автор «качча пачĕç ирĕксĕр», «атте-анне ăссăртан» сăмах майлашăвĕсене, рефрен вырăнне илсе, шухăш тĕвви туса хурать.

К. В. Иванов творчествинчи автор пуплевĕн тепĕр уйрăмлăхĕ — пайăр мар тӳрĕ пуплевсемпе усă курни. Пайăр мар тӳрĕ пуплев — повествованире персонажсен ăшри пуплевне палăртмалли хăйне уйрăм стиль мелĕ. Вăл тӳрĕ пуплевпе тӳрĕ мар пуплев хушшинче тăрать, ăна тӳрĕ пуплев теме те, тӳрĕ мар пуплев теме те çук. Тулашĕнчен пăхсан, пайăр мар тӳрĕ пуплев, автор пуплевĕн составне кĕрсе, унпа тачă çыхăнса тăрать, анчах хăйĕн семантикипе тата интонацийĕпе вăл тӳрĕ пуплеве çывăх. Çапла вара, автор пуплевĕнче пайăр мар тӳрĕ пуплевпе усă курни, пĕр енчен, персонажăн ăшри е вăрттăн шухăшне уçса пама пулăшать, тепĕр енчен, автор пуплевне персонажсен пуплевĕн сассисемпе эрешлесе, повествование чĕрĕ калаçу интонациллĕ тăвать. Тĕслĕхрен:

Виç юланут вăрманта
Йĕр йĕрлесе çӳреççĕ.
Пĕри кунта, леш унта

Темёнле йёр йёрлеççё.
Йёр йёрлеççё, итлеççё:
Пёрер сасă пулмё-ши?
Хёвел пăхать çутатса —
Кирлё çула уçмё-ши?
Анчах нимён паллă мар,
Кёрес тата шаларах.
Вăрçас килет çиллипе:
Тупасчё-çке хăвăртрах! (186 стр.)

Малтанхи пилёк йёркери сăмахсене автор хайёнчен калать. Ун хыççăнхи йёркесенчи сăмахсем йёрлевçёсен ăшри пуплевне палăртаççё. Паллах, йёрлевçёсем вăл сăмахсене пурте илтмелле сасăпа калама пултараймаççё: вёсен Нарспипе Сетнере систермесёр, шăппăн пырса тытмалла.

Кунсăр пуçне тата пайăр мар тӳрё пуплевпе поэт персонажсен кăмăл-туйăм пăлханăвне, шухăш пăтранăвне палăртма ăста усă курать. Акă Сетнер, ăшё çуннипе ниçта кайса кёрейменскер, сём вăрмана Нарспие Тăхтаман мăшкăлёнчен хăтарма васкать. Сасартăках çил тухса, вăрман тамăкри пек ахăрса каять, йёри-тавра хура пёлётсем хупăрласа илеççё, çёр çурса çиçём çиçет, тёнчене кисретсе аçа çапать, умра арçурисем, шуйттансем алхаснăн туйăнаççё. Ахаль те хыпса çунакан Сетнер тата хытăрах пăлханма, йывăр шухăшсемпе асапланма тытăнать. Çак кăмăл-туйăм пăтранăвне кăтартакан пуплеве К. В. Иванов çапла йёркелет:

[Сетнерён ăшри пуплевё:]

Сём-сём вăрман, сём вăрман,
Мёншён хытă шавлатăн?
Мёншён шăй-шай шăхăрса
Мёскён чуна хăрататăн?

[Автор пуплевё:]

Вăрман тата хытăрах
Шавлать, йёрет, ахăрать.

[Сетнерён ăшри пуплевё:]

Турă çырлах, ан пăрах!
Ахăрсаман хускалать!
Ах, çылăхлă пуçăма
Аçта чиксе хурам-ши?
Ах, çылăхлă чунăма
Епле тытса чарам-ши?..

[Автор пуплевӗ:]

Епле Сетнер мӗскӗн-ҫке
Урнӑ вӑрман ӑшӗнче.
Епле ҫирӗп йывӑҫсем
Юрлаҫҫӗ пуҫ тӑрринче. (234 стр.)

Ку ҫӗнӗ стиль мелӗ. Унпа вырӑс литературинче те XIX ӗмӗрте кӑна усӑ курма пуҫланӑ. Ҫакӑ К. В. Иванов повествовани тытӑмне йӗркелес тӗлӗшпе ытти классикӑлла литературӑна тимлӗ сӑнаса вӗреннине кӑтартса парать.

К. В. Иванов произведенийӗсенчи автор сӑнарне пӗтӗмлетсе, ҫапла калама пулать. Поэт творчествинчи автор — пурнӑҫа юратакан, ҫут тӗнче илемӗпе савӑнса киленекен, халӑх чунне, кӑмӑл-туйӑмне витӗр ӑнланакан, тавралӑха ҫивӗч курса ырӑпа усала лайӑх чухлакан ӑслӑ шухӑшлавҫӑ. Вӑл, хура халӑха ҫывӑх тӑраканскер, ӗҫхалӑхне савать, унӑн хуйхи-суйхине чӗрене йышӑнать, тӗнче ҫине халӑх куҫӗпе пӑхса, пурнӑҫри пулӑмсене халӑх ӑсӗпе виҫсе хаклать, калаҫасса та халӑх чӗлхипе калаҫать. Халӑх поэтикинчен «авторласа» илнӗ сӑнарлӑ та илемлӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе, танлаштарусемпе, эпитетсемпе, метафорӑсемпе, сӑпатлантарусемпе, параллелизмсемпе ӑста усӑ курса, асра юлакан сӑнлӑхсем, чӗрене кӗрсе вырнаҫакан сӑнарсем тӑвать. Ҫав вӑхӑтрах литература чӗлхине ҫӗнӗ стиль мелӗсемпе пуянлатать, повествовани тытӑмне аталантармалли ҫул-йӗре мӗнле шырамаллине кӑтартса парать.